К С(Чув)
М54
Ч-36308

*Александр Мефодьев*

# Юхать Пала



Национальная библиотека ЧР
4-036308

ВОЗВРАТИТЕ КНИГУ НЕ ПОЗЖЕ
обозначенного здесь срока

КФ
КС(Чув)
М54

*Александр Мефодьев*

# Юхать Пăла

Сăвăсем

Шупашкар - 1998

ПРОВЕРЕНО
2010 22 СЕН 2017

Ч-36308

Национальная библиотека
Чувашской
Республики

© Мефодьев А.И., 1998.

# *МАЛТАНХИ УТĂМСЕМ*

## *ВИÇĔ ЯТ*

Çиçĕм-Çеçпĕл, Митта Ваççилейĕ,
Вутлă-çулăмлă Альпăрт Канаш...
Виçĕ ят! Умăмра çăлтăр евĕр
Ялкăшаççĕ, çунаççĕ кăна.

Тăван халăхшăн харсăр çĕкленнĕ
Чи малтан асли – Çеçпĕл Мишши.
Шĕл-кăвар сăвăсем кĕвĕленĕ.
Нихăçан та сÿнмест ун йышши.

Чĕлхе маçтăрĕ иккĕмĕш сăвăç,
Ман ентеш, пуç пĕкмен Ваççилей.
Ăс парать пек: "Сăвва сума сăвăр;
Поэтсем, ан хăвалăр çиле!"

Тепри – Альпăрт Канаш! Çĕнчĕ паттăр
Инкекпе пăталанă чире.
Аптрамасăр утма вăхăтпа тан
Йыхăрса хавхалатрĕ пире.

Ак камсем вăй параççĕ ăш-пиллĕн:
"Пул, эс шăллăм, маттур, вашават!"
Ялкăшать те çунать хĕмлĕн, вирлĕн
Умăмра ĕмĕрех виçĕ ят!

1958

## *АТӐЛ ТӐРӐХӖ, АТӐЛ ТАВРАШӖ*

*В.В.Дергунова*

Сарлака сӗм вӑрман, анлӑ хир е ҫаран
Те ытла кӑмӑла кайнӑран-ши
Инҫетрен илӗртет, хӑй патнех йыхӑрать
Атӑл тӑрӑхӗ, Атӑл таврашӗ.

Кун курса ӳсрӗм эп, пултӑм ҫын ҫакӑнта,
Кашни утӑм кунта паллӑ маншӑн.
Пӗчӗкрен вӑй парса ҫитӗнтерчӗ патвар
Атӑл тӑрӑхӗ, Атӑл таврашӗ.

Ҫак тавралӑх ҫуратнӑ тӑван Ленина
Ӗмӗр вилӗмсӗр чӗрӗ тӑмашкӑн.
Мӗншӗн ак ман чуна ҫывӑх ят яланах
Атӑл тӑрӑхӗ, Атӑл таврашӗ.

1957

# *ТĂВАН ПĂЛА*

*Н.А.Исмукова*

Шывсем нумай Чăваш çĕршывĕнче:
Пур мăннисем, пĕчĕккисем тем тĕрлĕ.
Анчах та эп вĕсен çак йышĕнчен
Шур хут çине Пăла ятне çеç тĕрлĕп.

Пăла – мана çуратнă юханшыв.
Кунта иртнĕ ман манăçми ачалăх.
Эп çакăнта мĕн чуль чӳхеннĕ-ши,
Чăп-чăпăл шывĕ, кăмăллă та лайăх.

Çу кунĕсем-тĕк, вăлтасем илсе,
Тантăшсемпе пĕрле пулла çӳренĕ.
Хăш чух çыртан вĕт-шакăр чул персе
Касса кайсах киленнĕ, хĕпĕртенĕ.

Çĕре шур юр витсессĕн, сивĕтсен
Пăла та çирĕппĕн шăнса ларатчĕ.
Ялтăртатса çиçен пăр çийĕнчен
Конькипеле çиле касма аванччĕ.

"Çак мăн пăрпа юхса тасал пур чир!" –
Çуркуннепе вара ялан янранă.
Çыр хĕррипе чупа-чупа эпир
Пăрсем çине муклашкасем пăрахнă.

Ак эп паян нумай çулсем иртсен,
Инçет çĕртен тăван ене килсессĕн
Тăп çырантан тăратăп тинкерсе,
Пăла çинчен куçăмсене илмесĕр.

Тăп-тăрă шыв. Шур хăйăр – тĕпĕнче.
Кăтра та вĕтĕ хумĕсем илемлĕ.
Хĕвел шевли вылять вĕсем çинче,
Çак сăнсене курса епле киленмĕн!

Эх! Мĕнешкел Пăла çыранĕсем:
Пĕр енĕпе ӳсет ем-ешĕл курăк;
Шыв леш енче, ăш çил хуллен вĕрсен,
Яш хăвасем пуçне ухаç маттуррăн.

Чĕпписене ертсе ват кăвакал
Хăмăшлăхран, кур, авă, тухрĕ сумлăн.
Хурсем лере шавлаççĕ ка-ка-ка-к!
Хăйсем кашни юр пек шап-шурă тумлă.

Хавасланса вĕçеççĕ чĕкеçсем:
Пат! Çиçĕм пек Пăла çине анаççĕ,
Пĕсехипе шыв çумĕн сĕртĕнсе
Тӳпенелле сасартăк хăпараççĕ.

Чи хаклă шыв, тăванăмçăм Пăла!
Чунтан сана, чун-чĕререн саватăп.
Ялан çĕклетĕн çамрăк кăмăла,
Вĕçрен манра çĕн туйăм çурататăн.

## *ШКУЛĂМА*

Ăшă çилĕ хуллен,
Хĕпĕртӳллĕ вĕрсен,
Вăрман пек пысăк сад
Хумханать савăнса.

Кăтрашка та чечен
Хурăнсем хушшинчен
Шкулăм эс - çут кермен -
Чунăма илĕртен.

Эс - ăс-хакăл çăлкуç,
Патăн тăн чи малтан.
Çавăнпа манас çук
Эп сана нихăçан.

Сан çĕршер чĕппӳсем,
Çӳлелле çĕкленсе,
Ыткăнаç инçене -
Пĕлӳ сăрчĕ çине.

1955

## *АКАТУЙ САВВИ*

Тăвансемĕр, хирелле пăхсамăр
(Тăрăшсассăн ăнăçу пулать).
Кам ташламĕ, юрлас килмĕ камăн:
Хăмăш пек-çке тырă хумханать.

Йăлара пур ĕлĕкрен чăвашăн:
Çураки пĕтсен унта, ай-уй,
Çитĕнӳшĕн чыслăн савăнасшăн
Кĕрлетет вăл чаплă акатуй.

Курăр халь: мĕн чухлĕ ĕçлĕ халăх –
Пинĕн-пинĕн аслă уявра.
Кашниех патвар, ĕçчен, вăй-халлă.
Чун хистерĕ: "Çыр-ха сăвăра".

Каччăсем, эсир чечен çи-пуçлă.
Хĕрупраç чипер те мĕнешкел:
Чĕвĕлти чĕлхеллĕ, çивĕч куçлă,
Паланпа сăн-пичĕ пĕрешкел.

Уявра эпир, эппин савнар-ха.
Кам маттур – выляр та ăмăртар,
Янкăс юрă уççăн шăратар-ха,
Пур тавралăха ян! янратар.

Вĕçтĕр-çиттĕр пирĕн ирĕк юрă –
Хапăл туччăр аслă вăрмансем.
Илтчĕрех ăна, вара маттуррăн
Хумханса кашлаччăр уй-хирсем.

Ун чухне çав тырпулсен кашлавĕ
Чĕрене вĕр-çĕнĕ вăй кĕртсен
Эй, ĕçлес килет татах хастарлăн,
Кăмăлтан, чунтан хĕпĕртесе.

Ак паян кашниййĕ çунатланнă:
Çаврăнать улт-çичĕ карусель.
Тӳперен йăвашшăн, саламланăн
Ачашлать, лăпкать пире хĕвел.

1956

## *ЮЛАШКИ РЕЙС*

*(Грузчик юрри)*

Çил касать, çил касать, шăхăрать те юрлать,
Хăлхара ун çĕкленчĕк кĕвви.
Юлашки рейс паян! Çулпала маттурла
Ыткăнать çĕмрен пек грузовик.

Юлашки тоннăсем, сар ырашлă михсем.
Йышăнсам, эс çĕршывăм, ăна.
Ăнса пулчĕç кăçал уй-хирте тырăсем,
Ыр сунса парнелетпĕр сана.

Каскăн, шух шухăшсем ĕрĕхеççĕ мала,
Машинран те иртесшĕн-и, тен?!
Çĕкленет çултан-çул ман колхоз тăвалла,
Тулли ырлăх, телей – пур килте.

Кăмăлтан, кăмăлтан çул хĕрри пилешсем
Пуç сĕлтеç, çупкăмсем хĕп-хĕрлех.
Вăйлă ÿсĕ тыр-пул килес çул сĕрĕшсе,
Кÿлнĕ утăн пĕкки çÿллĕшех.

Юлашки рейс паян! Çил вылять çÿçĕмпе,
Чĕрене-çке çĕклет ун кĕвви.
Курăнать, ав, Йĕпреç. Ей, часрах, çиçĕм пек
Ыткăнсам, ыткăнсам, грузовик.

1957

## *АТТЕСТАТ ИЛСЕН*

– Ывăлăмçăм,- терĕ,- хаклă ывăл,
Эс кăçал пĕтерĕн вăтам шкул.
Саншăн тăрăшать тăван çĕршывăм.
Сан умра – тумхахсăр, такăр çул.

Каласамччĕ, ывăл, мĕн шутлатăн...
Кăмăлу, тен, институт енне,
Е çуралнă колхозрах юлатăн?..–
Çакнашкал пуплерĕ ман анне.

Колхозра, ялтах юлатăп, терĕм,
Виç сăмахăм хурçă пек тату!
Ĕçлесех эп пĕлĕве ӳстерĕп, –
Колхозрах пĕтерĕп институт.

1956

## *АЛНА ПАР, ШУПАШКАР*

Автобус чупать. Шоссе тип-тикĕс.
Ик енче те йăрăс хурăнсем.
Тĕлĕрсе ан пыр, пуҫна ан чик эс:
Ав, курнаҫ хуламăр ҫутисем.

Апрель касĕ, кăчăрт ҫеҫ ҫанталăк.
Урасем шăнни нимех те мар.
Хапхăна уҫсам, парсамччĕ алă
Пирвайхи хут, савнă Шупашкар!

1957

## *ТĔЛПУЛУ*

Кĕçĕн Вылă ялĕнчен
Таврăннă чух Сĕнтĕре
Тулă уйĕ варринче
Хирĕç пултăм пĕр хĕре.

Хам тĕле утса çитсен,
Сăмах хушрăм: "Ăçтисем?"
Темшĕн питĕ именсе,
Вăл каларĕ: "Йăлăмсем..."

Çак шур акăш умĕнче
Кăрт-кăрт сикрĕ яш чĕре.
Те вăл утмаçул çинче
Кăмăлларĕ-ши хĕре.

Çаврăнса пике иртсен,
Ăшшăн пăхрăм киленсе.
Хирĕç килчĕ мăшăр куç,
Тамашаçăм, мĕн-ши ку?

1956

* * *

Марьене пĕр вĕçĕмрен
Çырусем килеççĕ:
Икĕ каччă инçетре
Канăça пĕлмеççĕ.

Пит пĕлесшĕн тĕпчесе:
"Юратан-ши, тусăм?".
Кăмăлне хĕр пĕлтерсе
Хыпарларĕ уççăн:

"Хаклă йĕкĕтсем, сире
Чунтанах саватăп.
Вут пек хĕрӳ чĕререн
Ак çапла калатăп:

Ăмăртуллă ĕçсенче
Пулĕ кам хастарлă,
Паллă ĕнтĕ, ун енчех
Манăн ăраскалăм".

1956

## *ÇУРХИ САНСЕМ*

Хаяр хевтеллĕ сивĕсем çухалчĕç,
Йĕре-йĕрех ăсанчĕç инçене.
Утсем якатнă ыр çулсем хуралчĕç,
Шăнкăртатса юр шывĕсем хускалчĕç, –
Умра каллех халавлă çуркунне.

Çип пек тӳп-тӳрĕ, сарлака та аслă
Урам тулли ача-пăча хĕвшет,
Сăн-пичĕсем çиçеç вĕсен хаваслăн,
Шутлатăн эс: Вĕсенче вĕт пуласлăх! –
Çак ĕмĕт халь чуна çĕклентерет.

Илемлĕ çур! Ытла сăпай çанталăк!
Сăрт-ту хура, пĕр саплăксăр уй-хир.
Ыр сывлăш уçă, кăмăллă та лайăх,
Юрлать каçса кайса садра саркайăк, –
Мĕнпур чĕрчунăн сирĕлчĕ ыйхи.

Шыв сассипе ăмăртмалла янратрĕ
Хăй сассине мастерскойри сунтал.
Чечен тăри çӳл тӳперен тăрлатрĕ,
Ĕçре хистенĕн тимĕрçе тарлатрĕ,
Çăл пек юхать ун ӳтĕнче вăй-хал.

Куллен-кунах хĕвел хĕртет хĕрӳллĕн,
Ярăнтарса çиçет çине-çине.
Çурхи тӳпе яп-янкăр, илĕртӳллĕ,
Кăваклатса хуркайăксем ир кӳлĕм
Анса лараççĕ "Уй кӳлли" çине.

Хавасланса сăнан, епле киленмĕн,
Умрах çиçсен ик куç тулли илем.
Çеçке сăнсем чуна лăпканă çемĕн,
Чĕрем юрлать вĕр-çĕнĕ юрă-çемĕ,
Ман вăкăр пек вăйпа ĕçлес килет.

1956

## *ЙЫВĂÇ ЛАРТМА*

Хăрвар тавраш, Кипет çăварĕ,
Ахрат шырланĕ, Тип çырма
Паян ак юрăпа янрарĕç,
Яш-кĕрĕм тухрĕ сад лартма.

"Тăван уй-хир илемлĕ пултăр,
Ан юлчăр усăсăр çĕрсем,
Çак сад та çимĕçсемпе тултăр,
Пĕрле лартар-ха йывăçсем",–

Юрла-юрла ĕçлет яш-кĕрĕм,
Йышпа чухне канас, ансат.
Çут ĕмĕт пурăнăça кĕрĕ –
Панулмисем пулĕç ăнса.

1957

* * *

Илĕртӳллĕ çуркунне
Тĕрĕленĕ çурт умне
Шăнкăрчсем иленчĕç,
Шăхăрса киленчĕç.

Ыр çанталăк уççинче
Улма йывăççи çинче
Юр юрлать çак кайăк
Шăпчăкран та лайăх.

1955

Ч-36308
Национальная библиотека
Чувашской
Республики

* * *

Хир çийĕн хаваслăн
Тăри ярăнать.
Пĕр самант канмасăр
Юрă шăрататъ.

"Вăхăт – васкамашкăн,
Вăхăт, - тет, - вĕри.
Акана тухмашкăн
Пурте хатĕр-и?"

1955

## *ÇЫРУ КИЛЧĔ АЛТАЙРАН*

Çыру килчĕ кайăк евĕр:
Çыру килчĕ Алтайран,
Чăтаймарăм тĕлĕнмесĕр
Ытла хулăн пулнăран.

Аптăрарăм, мĕн-ма хулăн,
Ма нумай çырнă савни,
Асăнса унта, тен, хунă
Пит шăлли - тĕрĕлени.

Вăл та мар, тен, сăн ӳкерчĕк
Чикнĕ пуль конверт ăшне.
Ку мана йăлт тĕлĕнтерчĕ, -
Чим, уçам-ха конвертне.

Ан кулян, чим, кур, мĕн тухрĕ -
Кĕгни тĕрĕс мар пачах,
Конверт уçрăм - пуçне ухрĕ
Шитрен вăрăм сар пучах.

1957

* * *

Чăпар тумпа вăрманĕ, уйĕ.
Салам сар авăнри ире,
Кĕр ялавне çĕкленĕ уйăх
Вĕренĕве чĕнет пире.

Аван ирттертĕмĕр, йĕркеллĕ
Каникулри ыр кунсене.
Тырпул пухса кĕртме тирпейлĕн
Пулăшрăмăр аслисене.

Паян калатпăр харăс, йышлăн,
Çитсе тăрсан кермен умне:
"Аван-и, шкул! Ту хапăл, йышăн,
Лартсамччĕ парта хушшине!"

Пиччемĕр Çеçпĕл хушнă мар-и
Малашлăха хастар утма.
Эппин хăюллăн хăпарар-и
Ăс тӳпемне пĕлӳ пухма.

1957

* * *

Урампа пырать пĕр ӳсĕр,
Пичĕ-куçĕ килĕшӳсĕр.
Тытнă тейĕн тытамак –
Утаймасть, пуплет мăк-мак.

Çиткелет килне: "Ых!.. ар-р-рăм!" –
Кăшкăрать урса хаяррăн.
Кулянать ирпе: "Ах турă...
Пĕр черкке йăлтах тĕп турĕ.

Карт лартатăп, ĕçмĕп урăх,
Ĕçе савăп, çӳрĕп урă...
Мухмăра çех çак черкке,
Юлашки... Вара текех..."

Пĕр черкке! Епле вăл ырă,
Ярăнса ун кайрĕ пырĕ.
Чим, тепре, унтан – тепре.
Ак хай Петĕр лĕпĕрех.

Аншарлин хаяр хăвачĕ
Çак çынна йăлт пăсса ячĕ,
Колхоза тухмасть ĕçе,
Мухмăр, тет, кӳпет, ĕçет.

Петĕр пек çынсем пĕрерĕн,
Вĕсене, туссем, пĕрер-и.
Ĕçкĕ çулĕнчен сирер,
Çавăтар пĕрле хире.

1958

## *САЛТАК САССИ*

* * *

Эп хурлăх юрри юрламарăм,
Йĕрсе тутăрсем сулламарăм,
Повестка илсен салтака кайнă чух,
Салху йăларан пăч ман ютшăнчĕ чун.

Клубра ялхуçалăх эртелĕ
Мана чысласа хисеплерĕ:
"Ялта, колхозра эсĕ пултăн малта,
Апла-тăк çарта та пул паттăр салтак".

Тавах, ял-йыш, ман хаклă халăх,
Сан пилўпе пулăп вăй-халлă.
Усал тăшмана лăпкă çĕрĕм çине
Пустармăп, тăстармăп хура аллине!

1958

## *АННЕНЕ*

Уйрӑлу асрах-ха... Йӗтӗн-ҫке темме,
Юлашки хут хамӑн ытама илсессӗн.
– Эп сана хисеплӗн, чаплӑн ӳстермен.
Каҫарсамччӗ, ывлӑм, чунӑм... – терӗн эсӗ.

Ӑнланап, аннеҫӗм, пӗчӗкрен мана
Сим те ӗҫтермерӗн, пыл та хыптармарӑн.
Ытарми кӗрпеклӗ ҫӗрулми кӑна
Турӗ ҫирӗп. Эпӗ ҫемҫешке пулмарӑм.

Ҫӳреймерӗм йӑлтӑр ҫут пушмаксемпе,
Пурҫӑннӑн-сатинӑн ҫи-пуҫ ҫиҫеймерӗ,
Хӑв тӗртсе ҫӗленӗ хӗрлӗ кӗпепе
Ҫӳресех ялта эп вунӑ класс пӗтернӗ.

Хӗлӗсем хаярччӗ. Ӑшӑтма пӳрте
Ҫитейсе пымастчӗ тертлӗн кӳнӗ вутӑ.
Кӑнтӑрла ӗҫреччӗ, каҫхине килте
Маншӑн эс тупаттӑн ырӑ йӑпату та.

– Ывӑлӑмҫӑм, - теттӗн, куснӑ май йӗкӳ, -
Ан кулян начаршӑн, пурнӑҫ лайӑхланӗ,
Аллунтан ан кайтӑр чаплӑ кӗнекӳ,
Вӑл сана телей те ӑс та паракан.

Хӑть мӗнле ӗҫ пултӑр – йышӑн тарават,
Ут хӑюллӑн, ҫирӗп, чӑрмава пӑхмасӑр.
Ҫуратса ҫын тунӑ ҫӗршывна юрат,
Халӑхпа пӗрле пыр, ӗнӗрле пӗр сасӑ.

Эрехе ан хапсӑн, тапака – пул ют.
Тыт хӑвна типтерлӗ, ҫапӑҫса ан ашкӑн.
Суяпа ултавсӑр, тӗрӗслӗхпе ут,
Ӗҫӳпе пӗл, терӗн телейне тупмашкӑн.

Юхрӗҫ уйӑхсем тек, иртрӗҫ яш ҫулсем.
Тӳрӗ чунлӑ ӳсрӗм, тӗрекленчӗ вӑйӑм.
Тӑтӑм Ҫар ретне те Ҫӗр-аннем чӗнсен:
Аптрами салтак эп – гварди рядовойӗ.

Эх, анне! Пушшех те ют ҫӗрте паян
Пиллевӳн сăваплă ăшшине туятăп.
Саламсем яратăп халӗ аякран,
Тав туса хӗрӳллӗн пуҫăма таятăп.

1958

## *ШУПАШКАР КАЛАÇАТЬ*

Эфирта эп шырап Шупашкаран хумне,
Радио тӳммине пăркалатăп каçпа.
Ак кĕçех сас килет, çупăрлать чĕрене:
"Шупашкар калаçать. Вырăнти вăхăтпа..."

Тĕп хуламăр сасси, тăван халăх сасси
Тунсăх-çке мĕнешкел ют çĕрте халь мана.
Эп илтетĕп: паян Чăвашра ырă ир,
Ёçлĕ ир, ытарми тӳп-тӳлек самана.

Эп илтетĕп: паян савнă халăхăм ман
Çĕршыври çĕр чĕлхеллĕ хастар йăхсемпе
Улăпла утăмпа çĕнтерӳллĕн пĕрмай
Хăпарать тăвалла çĕнтерӳ пусмипе.

Шупашкар калаçать... Пĕтĕм взвод ман тавра
Харсăр халăх сасне итлесе киленет.
Тăван сасă пире аякран, аякран
Çирĕп миршĕн ялан сых тăмашкăн чĕнет.

1959

* * *

Çартан çыру илсен манран
Эс пăлхансах-и вулăн:
"Çыру мёскер, хăй çук умра", –
Тесе салхуллă юлăн.

Савниçĕм, кăлăх ан кӳрен.
Антив, инçе, санпах çӳретĕп.
Эс, шан: эп çырăва чĕрен
Таса кăварĕпе тĕрлетĕп.

1958

## *ХĔР САМАХĔ*

Пĕрмаях ман хыççăн ан çӳреччĕ,
Кăлăхах ан пӳлччĕ хĕр çулне,
Шухăшна эс ман çинчен сирсемччĕ,
Kaççерен ан пырччĕ кил умне.

"Вăйăра чух ун патне пырсассăн
Ма-ши шав манран вăл пăрăнать, –
Ăнланмасăр эс сывлатăн ассăн, –
Çирĕмре хăй, туссăр пурăнать..."

Ну, итле, пĕлес килет пулсассăн:
"Тусăм пур ман питĕ инçетре.
Тен, çак кас та чĕптĕм сĕнк пулмасăр
Вăл постра тăрать пуль чикĕре.

Эп ăна кĕтме сăмах парсаччĕ
Вăл салтак пулма ăсаннă чух.
Гварди рядовойĕ халь çав каччă.
Пĕр унпа анчах ман çамрăк чун.

Кулянмастăп халь çумра пулманшăн,
Çӳрететпĕр ăшă çырусем.
Вăл вута кĕме те хатĕр маншăн,
Эп ăна илетĕпех кĕтсе.

Ан çӳреччĕ урăх эс тархасшăн
Калитке умне текех çĕрле,
Ан çунах хĕр ĕмĕтне татасшăн,
Салтака кĕтме ан кансĕрле".

1958

* * *

Ун чухне çанталăк пуçсенчен шăлмарĕ,
Çăмăлах пулмарĕ çав вĕренӳре.
Çилĕллĕн тӳпе тек юрлă шыв алларĕ,
Витĕрех шӳтерчĕ пирĕн тумтире.

Çиçĕм хĕресленчĕ, çил те урчĕ питĕ...
Пехота çĕкленчĕ çĕн атакăна –
Кӳлленчĕксем урлă, шăршлă шурлăх витĕр
Аркатса тăкмашкăн ирсĕр "тăшмана".

Пылчăк ашрăм эп те, малалла васкарăм,
Пĕрмаях шутларăм хамăн ăшăмра:
"Çирĕпрех пуласчĕ, ку нимех те мар-ха,
Хĕнтерех те пулĕ, – терĕм, – вăрçăра".

1959

## *ÇĔНĔ ÇУЛ КАÇХИНЕ*

Çĕнĕ çулăн черкки чăнклатмарĕ
Куштăрканă патвар аллăмра.
Çак самант эп пострa чăмăртарăм
Автомат-тусăма хыттăнрах.

Çакăнта, аякка, çĕршыв ячĕ:
"Ывлăм, тыт хĕçпăшал, хуралла!"
Вут-кăвар чĕремре – халăх ячĕ,
Вăл хушать сых тăмашкăн ялан.

Паян сарăл, Çĕн çулăн саламĕ!
Тăван Çĕрĕм, çĕкле черккӳне!
Ĕненсем, ывăлу пăсма памĕ
Тăшмана сан таса чиккӳне.

1958

## *ЮРĂ – ПИРĔН ÇУНАТ*

Взвод утать. Пур салтак тумтирне çумăр витнĕ.
Сăн-питре кашнинех ĕшенни палăрать.
Пĕр канмасăр паян миçе çухрăм пуль иртнĕ,
Çавăнпах та, тен, халь взвод утать шăппăнрах.

Ак сасартăк малта тахăш юрă пуçларĕ,
Вăйланса вăл янрарĕ, пур йыш хутшăнсан.
Харсăр юрă кашни салтака çăмăллатрĕ,
Самантрах ывăнни те пытанчĕ тарса.

Маттур юрă – вăл пирĕншĕн сывлăш пек хаклă.
"Юрă, – тетпĕр эпир, – эсĕ – пирĕн çунат".
Мĕншĕн ак, взвод ăна шăрантарчĕ сулмаклăн;
Мĕншĕн ак салтаксем шав ăна тарават.

1958

* * *

Тухăҫа чăмать ҫĕмрен пек пуйăс,
Нимĕҫ ҫĕрĕ, Польша та хыҫра.
Кĕҫ Тăван ҫĕршыв, чи ҫепĕҫ туйăм
Ҫупăрлать сасартăк кăкăра.

Вакунран пăхатăп кантăк витĕр:
Уй-хирсем, шывсем те вăрмансем.
Ял-хули ӳсет. Капмаррăн питĕ
Ҫĕкленеҫҫĕ стройкăсем, ГЭСсем.

Отпуска киле килеп хаваслăн,
Саламлать тăван ҫĕр салтака.
Эх, ҫĕршывăм, мĕнешкел эс аслă,
Вĕҫ хĕррисĕр пысăк, сарлака.

Вăрăм ҫул... Шăп виҫĕ кун пыратăп,
Ыткăнать ҫеҫ пуйăс ҫил касса...
"Вăрҫăра, – теп, – ҫак ҫула пехота
Тухнă мар-и хырăмпа шуса".

1959

## *НИМĔÇ ХĔРĔСЕМ СУЛАÇÇĔ АЛĂ*

Вĕренĕве иртет машин та танк:
Хуркайăксен карти тесе те калăн.
Германире пире пур кăмăлтан
Вăй-хал сунса хĕрсем сулаççĕ алă.

Вĕсем пĕлеççĕ: мирлĕ çар пырать,
Совет салтакĕ – ирĕклĕх хуралĕ.
Ак мĕншĕн ăраскал сунса чунран
Кунти хĕрсем пире сулаççĕ алă.

Эс, инçетри савни, ан кĕвĕçех,
Ку çĕршывра килти пекех эп халĕ.
Чăваш хĕрупраçне ал сулнă пек
Ют хĕрсене савса сулатăп алă.

1958

# ХАЛЬХАÇÇĂНХИ КĂМĂЛĂМ

## ТĂВАН ЯЛĂМА – ЕНШИКЕ

Ылтăнах сăпкара сиктермерĕн,
Имлĕ-симлĕ шерпет ĕçтермерĕн,
Пыл карасĕ касса ĕмтермерĕн.
Пурпĕрех мĕншĕн-ши, мĕншĕн-ши
Асăмрах эс тăратăн, Еншик?

Сарă кĕрĕк илсе çĕлетмерĕн,
Çĕн сăсар çĕлĕкпе çӳретмерĕн,
Йăлтăркка атăпа çиçтермерĕн.
Пурпĕрех мĕншĕн-ши, мĕншĕн-ши
Хăв патнах эс туртатăн, Еншик?

Хирӳ тăрăх хутларăм пин çаврăм,
Çурлапа тыр вырса пилĕк аврăм,
Тăварпа кавсăлса юхрĕ тарăм.
Пурпĕрех мĕншĕн-ши, мĕншĕн-ши
Эп сана манаймастăп, Еншик?

Сан сăнна çырмасем çĕмĕреççĕ,
Тем çитмест пуль: садсем ĕрчеймеççĕ,
Пахчусем хăйăрпа витĕнеççĕ.
Пурпĕрех мĕншĕн-ши, мĕншĕн-ши
Çăтмах пек эсĕ маншăн, Еншик?

*ТĂХĂРВУНИККĔМĔШНЕ*

## *КĔНĔ МАЙ*

*В.А.Васильева*

Кивĕ çула алă султăмăр,
Килчĕ кĕтнĕ Çĕнĕ çулăмăр.
Упранĕ-ши ун чух куллăмăр,
Хутшăнĕ-ши пурлăх-мулăмăр,
Тен, йĕмсĕрех тăрса юлăпăр.

Саманипе пĕрле пурсăмăр
Курмаллине тем те куртăмăр:
Арканчĕ СССР – Çуртăмăр,
Ăна таткаласа çуртăмăр.
Халь ак ăçталла-ши юртăпăр.

Çăмăл мар лавăмăр – туртăмăр,
Пурпĕр мекĕрленсе туртăпăр,
Хăш чух лак анăпăр, пуртăпăр,
Пылчăк аша-аша утăпăр.
Çавах çитсе çурта çутăпăр.

Ан сӳнех, чĕрери çулăмăр,
Эс çĕтсен йăлтах тĕп пулăпăр.
Тусăмсем, пĕрлешĕр, пухăнăр,
Чунăрпа йăшса ан юхăнăр,
Инкекрен пĕрле çеç тухăпăр.

1991

* * *

*З.П.Сулагаева*

Çитетпĕр утмăла, кĕçех иртетпĕр,
Чĕре йăш-яш чикет кас-кас, сисетпĕр,
Çавах ал панă чух: "Аван-ха!" тетпĕр.

Кунçул пире симпыл питех сĕнмерĕ,
Сар сăпкара ачашшăн сиктермерĕ,
"Телей пиллем-ха, илĕрех!" темерĕ.

Пирĕн ăру темчул хуçа та курчĕ,
Кашни çулпуç çиллессĕн сăхрĕ, урчĕ,
Асап та терт кăтартрĕ, кулчĕ, сурчĕ.

"Атте" тесе пĕрин пирки юрлатчĕç,
Теприн çинчен анекдотсем хыватчĕç,
Виççĕмĕшне çăлтăрсемпе чыслатчĕç.

Пулин! Эпир çавах чакман, пĕрлешнĕ,
Хура вăйпа çине тăрса кĕрмешнĕ,
Илемпеле тасалăхшăн кĕрешнĕ.

Атте ятне эпир çӳлте тытман-и?
Анне пилне чун варрине хуман-и?
Ыр кăмăла ачасене паман-и?

Сĕршыв каллех кĕрлет – пăлхавăр тапхăр:
Еçлес чухне – палкатпăр, тавлашатпăр,
Çĕн самана тăвас тесе, шавлатпăр.

Çав пăтрава чипер çĕнсе тухасчĕ,
Чăн туслăха тытса мала утасчĕ,
Чăвашлăха куç шăрçи пек упрасчĕ.

1996

## *САВАПЛĂ АЛĂСЕМ...*

*Патăръелёнче пурăнакан юратнă*
*Хветтис аппана тата пурнăçран вăхăтсăр*
*уйрăлса кайнă Натали аппана халалатăп*

Патăръелём. Пёчёк çеç хваттер.
Хёрлё çăлтăрлă, сăрланă алăк...
Кашнинчех чун пăлханать çавтер,
Хăлăпне пырса тытсассăн алă.

Хумханса кёретёп ерипен,
Тёпелтен тухать кёç ик аппаçăм:
"Шăллăм килчё", - теççё. Ик енчен
Ик çунат пек ăшшăн çупăрлаççё.

Аппасен сăваплă аллисем...
Кăшт тăртаннă. Вăхăт йёрё - чухлăн.
Пурпёр çепёç халё те вёсем,
Ачашрах унчченхинчен тем чухлё.

Шăп çавсем-çке пёчёк чух мана
Кипкепе çемçен кăна чёркенё,
Пёкечеллё сарă сăпкана
Пёр кана юрла-юрла сиктернё.

Чёререн хёрхеннё аннене-
Инкёшне - шелленё те ыр суннă
Çунă пўрт, тасатнă кил ăшне,
Хушăран тухса ёне те сунă.

Эх, алсем, мухтавлă аллăсем...
Тупата, мён-мён кăна туман-тăр?!
Каçсерен "чёп куçёпе" вёсем
Миçе мăшăр çăпата хуçман-тăр.

Çав алсем халхавлă кёрпеле
Тырă вырнă, çапнă та пуçтарнă.
Хёл çитсен, арланă кёнчеле,
Вăрмантан турат тавраш турттарнă.

Анăçран килсессён кăварпа -
Аппасем ман хаярланчёç, хытрёç.
Çичютаваскарёç тавăрма,
Иккёш икё еннелле çул тытрёç.

Кӗҫӗннийӗ тӑкрӗ ҫулӑм-вут –
Фашиста ҫунтарчӗ те турарӗ.
Аппӑшӗ ун тытрӗ "хурҫӑ ут" –
Уй-хирте ҫӗнтерӗве туптарӗ.

Пинӗн-пинӗн вӑрҫӑ яшсене
Юнлӑ авӑра ярса путарчӗ.
Сар чечек пек сар пикесене
Мӑшӑрсемсӗр тӑратса хӑварчӗ.

Аппамсем тертленнӗ, курнӑ шар,
Чӑрмава ҫӗнсе мала ҫул хывнӑ.
Ҫынсемпе шав пулнӑ юнашар,
Вӗсемпе мухтанмӗ-и ҫӗршывӑм.

1987

## *ЧĂВАША МĔН ÇИТМЕСТ?*

*(Çĕнĕ çулхи кăмăл)*

Чăваша мĕн çитмест?
Пĕтĕçӳ, пĕрлешӳ,
Çураçу, мирлешӳ...
Çавна пар чăваша, Çĕнĕ çул!

Чăваша мĕн çитмест?
Тăван йăхшăн çунни,
Чĕлхине ыр сунни...
Çавна сĕн чăваша, Çĕнĕ çул!

Чăваша мĕн çитмест?
"Эпĕ те çын!" тени,
"Эпĕ – халăх!" тени...
Çавна сун чăваша, Çĕнĕ çул!

Чăваша мĕн çиет?
Кӳлешӳ, хирĕçӳ,
Вĕчĕхӳ, кĕвĕçӳ...
Çавна пăр чăвашран, Çĕнĕ çул!

Чăваша мĕн хуçать?
Пĕр-пĕрне таптани,
Çăхавпа варлани...
Çавна тарт чăвашран, Çĕнĕ çул!

Чăваша мĕн хăртать?
Тымарне хăй ватни,
Туратне хăй татни...
Çавна сир чăвашран, Çĕнĕ çул!

* * *

Чăваш улăпне çак хĕрарăм çуратнă,
Çунат хушнă хыççăн вĕçтернĕ инçе.
Кун-çулăн тумхахĕ çӳçне те шуратнă,
Йĕрсем те хăварнă сăн-пичĕ çинче.

Ăна саламлать халь юратнă çĕршывăм,
Ăш чунлă çак карчăк хаваслă паян:
Вăл кун кăтартса çитĕнтернĕ яш ывăл
Çĕкленчĕ чи çӳллĕ çут çăлтăр таран.

1962

* * *

*А.С.Смолина*

Юхать, юхать Энёш, ай, юхать.
Вёлтёр-вёлтёр кăна хум чупать.
Юхтар, Энёш, шывна, юхтарах;
Атăл çине ăна кăларах;
Унтан тинĕселле ăсатах.
Ан тĕселтĕр сăнĕ ун, ан çĕттĕр.
Ан çухалтăр сасси ун, ан пĕттĕр,
Илем кӳтĕр аслă тинĕсе,
Парнелетĕр ăна сан тĕсе.

Уçăм-калча селĕм ешерет,
Симĕс пӳсе аса илтерет.
Ешер, уçăм, тасан ешерех;
Пĕве ярăн, çĕклен çӳлерех.
Кĕркунне сар çитти те пĕркенсем –
Пĕрчӳсемпе тулччăр кĕлетсем.
Çăкăр пулса çынна савăнтар,
Кӳр ăна ăраскал, пархатар.

Маттур тиха çӳрет улăхра,
Туять хăйне çăтмах-ырлăхра.
Хавасланса яш чун кĕçенет.
Тапхăр-тапхăр чупса киленет.
Выля, тиха, выля кунсерен,
Тĕреклен те эсĕ çирĕплен.
Çиçтĕр аçа-çиçĕм, тухтăр вут:
Пулах ытарайми паттăр ут.

1987

* * *

Сăн-питĕнте - тасалăх, çутă.
Ултав-суя пач саншăн ютă.
Чăн чăвашла сăпай тытатăн,
Ăспа виçсе сăмах хушатăн.

Хăвах эс сăввине çыратăн,
Хăвах эс кĕввине хыватăн,
Хăвах эс юррине юрлатăн...
Эс манăн кăмăла каятăн.

* * *

Тавтапуç сана
Чуна йывăр чух
Ман пата килнĕшĕн,
Ман хута кĕнĕшĕн.

“Ăнлансам, ĕмĕр
Тикĕс килмест”, тенĕшĕн;
“Вăл сурансăр иртмест”, тенĕшĕн.
Тавтапуç сана...

## *РАШТАВ*

*З.В.Ильинана*

Сар хёвел ахах-мерчен акать-и,
Шурă хир куçа йăмăхтарать-и,
Вичкĕн çил питрен кăшт кăтăклать-и...
Ах, ытла та селĕм эс, раштав!

Лĕпĕш пек юр пĕрчисем ÿкеç-и,
Тумтире тĕрле-тĕрле пÿкеç-и,
Таврана çăтмах сăнне кÿреç-и...
Сарă кун çĕршывĕ эс, раштав!

Йĕлтĕрпе пике шуса килет-и,
Çул урлах куян ĕрĕхтерет-и,
Тилĕ-тус йăпăртатса иртет-и...
Чĕрĕ те вăр-вар та эс, раштав!

Пăчăрсем вăшт юр айне чăмаç-и,
Уйăпсем пилеш çиме лараç-и,
Кăсăя-туссем юрра яраç-и...
Шукăль та маттур та эс, раштав!

1988

## *АЙ, ЧУН ЫРАТАТЬ*

Тӳпемре ларакан
Пысӑк мар фермӑран
Шӑршлӑ сарӑ шӗвек сӑрхӑнать, сӑрхӑнать...
Юнашар юхакан,
Ҫавала ҫул тытан
Тӑп-тӑрах та шыва саратать, саратать.
Ай, чун ыратать.

Ҫӗр ҫулхи юмансен
Ҫап-ҫарах тӑррисем
Хими хумӗ пырса хирнӗрен-ирнӗрен.
Чӗвӗлти шӑпчӑксем,
Шӑнкӑрти шӑнкӑрчсем
Таҫта ҫӗтнӗ чунне кансӗртен, хӗсӗкрен.
Ай, чун ыратать.

Аслӑ Атӑл ҫинчи
Шупашкар варринчи
Кӗрӗс-мерӗс тӑсланкӑ хура тӑрпаран
Тӗтӗм-сӗрӗм тухать,
Таса сывлӑш хухать,
Питӗ йывӑр пыра, тем пусать кӑкӑра.
Ай, чун ыратать.

* * *

*Юрккана*

Шăплăх... Турăш та çурта, лампада,
Çимĕçпе тулли сĕтел умра.
Килĕнте эс, тупăкра выртатăн,
Тăвансем тăраççĕ сан тавра.

Ах, ытла та тĕттĕм-çке çу каçĕ,
Кăмрăк пек хура ял тăрринче.
Вăйсăррăн çеç, тĕлкĕшсе çунаççĕ
Лампăсем тулти юпа çинче.

Асласу йăмрийĕ те салху çав:
Сĕмлĕхре ларать пуçне усса.
Вĕлтĕр-вĕлтĕр анчĕ ак пĕр çулçă
Алкумне, тен, сан чуну пулса.

Савăк мар паян эс савнă кӳлĕ,
Хурланса вĕçет пĕр шур чарлан,
Пӳрт енне пăхса хӳхлет чĕнӳллĕн.
Чарлан мар-тăр, эсĕ сас паран.

Çурĕ çумăр лăслатса çур талăк,
Çăвăнса тасалчĕ каяс çул.
Те шăп саншăн йĕчĕ çутçанталăк,
Те çав çумăр пулчĕ сан куççуль.

Çуталса хĕвелĕ лăпкăн тухрĕ
Тупăкна çĕрпе хупланă чух.
Кӳлĕ çийĕн вĕтĕ хумсем чупрĕç.
Çăлтăр евĕр сӳнтĕн – килес çук.

Хумханайрĕ Шăхасан уй-хирĕ,
Йывăçсем илейрĕç тайăлса.
Ĕмĕрлĕх ăсантăн эсĕ пирĕн,
Сăнару çех юлчĕ тап-таса.

1995

## *ПИНЕРПИ*

Çĕвĕçĕ Пинерпине –
Ялăн харсăр пикине
Шукăль хула каччисем
Çавăрасшăн пикенсех.

Çулăхрĕ доцент Тарас:
"Хваттер пур, – тет, – хулара..."
"Хăп халех эс ман çумран", –
Касса татрĕ хĕр кăран.

Çыпăçрĕ шофер Сахар:
"Ярăнар, – тет, – савăшар..."
Ячĕ хĕр çутăлтарса,
Йĕкĕт тăчĕ аптраса.

Çуланчĕ сутуç Вăççа:
"Пурăнăн, – тет, – ыр курса..."
Тĕртрĕ те хĕр тарăхса,
Лешĕ кайрĕ тайăлса.

Çавăрчĕ кĕтӳç Куçук,
Пинерпишĕн канăç çук.
Сăмах татрĕç: "Çырăнар,
Ялтах йăва çавăрар!".

1990

## *АХ, МУХМĂР КАСТАРАТЬ!*

Сантăр турĕ те ниме
Шыв пек юхрĕ кĕрчеме.
Тытăнчĕ пуç кӳпчеме,
Çур кун хĕсрĕ чĕреме.

Чĕнчĕ хур пусма Паçук –
Хĕрли ĕçрĕм – чару çук.
Хĕрли те хаяр иккен –
Икĕ кун чикрĕ чикен.

Уçăп чун уçма мана
Кăчăк туртрĕ лапкана.
Çутти хĕртрĕ-çке юна –
Мухмăр пычĕ виç куна.

Тихăн кум пумилккинче
Ханша сыпрăм мĕн ирччен.
Хуйха сиртĕм ханшапа –
Çич кун халь ак вырăнпах...

Ăш-чик эрех йышăнмасть,
Апат чĕптĕм те анмасть.
Тапхăр-тапхăр хăстарать,
Ах, мухмăр кастарать.

Ик эрне сухал хырман,
Уйăх мунчара пулман.
Чĕтĕреççĕ аласем,
Курăнаççĕ шуйттансем.

Выçă ларас ачамсем,
Çĕтĕк-çатăк тумĕсем.
Пӳрте хутма вуттăм çук –
Вутта кайма мутăм çук.

Тарăхать арăм – Наçча:
Ма кайрăм-ши , тет, качча.
Ма турăм санпа ача,
Çемье шар курать анчах.

Тухрӑм ахӑр выльӑха,
Пач ҫухатрӑм ҫынлӑха.
Калӑр: епле урӑлас,
Мухмӑр иртмест, мӗн тӑвас?

## *ТЕМИÇЕ ЙĔРКЕН*

* * *

Савни килĕ енчен
Çил вĕрет вăшăл-вăшăл.
Хăлхаран вăл хуллен
Тем калать пăшăл-пăшăл.

* * *

Çăтмах пулĕ эс, тĕттĕм каç:
Тӳпере - çăлтăрсем ялкăшаç,
Умра - хĕр куçĕсем йăлкăшаç,
Тутисем ун çырлан туйăнаç.

* * *

Тăван ен –
Еншикпе Патăръел...
Кунта уçăрах пек сывлăш,
Ăшăрах пек хĕвел.
Тăван кĕтесĕм –
Еншикпе Патăръел...
Ӳс, çĕнел,
Ӳс, çĕнел.

* * *

Сурчăк сирпĕтсех паян
Çĕн вырăссем
Ленина хурлаççĕ те хурлаççĕ.
Палăкĕ умне вара
Çĕн мăшăрсем
Пуç тайса çаплах чечек хураççĕ.

* * *

Ӑмӑр кун ҫӳлтен пӗр вӗҫсӗр юрлӑ шыв аллать.
Суккӑр вӑйӑҫ шӑнса кӳтнӗ – купӑсне калать,
Пасарта “Ан авӑн, шӗшкӗ” ҫӗкленсе юхать...
Ҫак юрра итленӗ май ман куҫҫулӗм тухать.

* * *

Куккук, эсӗ авӑтан та -
Чуна савӑнӑҫ уҫать.
Чӗппӳсем ҫинчен манан та -
Чуна йывӑрлӑх хуҫать.

* * *

Автобуса пырса кӗрсен,
“Ларсамччӗ, асатте”, тесе
Сӗнеҫҫӗ вырӑн ҫамрӑксем.
Чун савӑнать хисеп тивнишӗн,
Чун хурланать кунҫул иртнишӗн.

* * *

Хӗрсем ҫине пӑхатпӑр та пӑхатпӑр,
Хамӑр алла ҫитни ҫинчен манатпӑр.

* * *

Эх, епле аван
Ҫуллахи ҫут ир!
Вӑранать вӑрман,
Вӑранать уй-хир!

* * *

Вӗлтӗр-вӗлтӗр ҫулҫӑсем ӳкеҫҫӗ,
Урамсем пӗркенчӗҫ сар ҫитти.
Шухӑшсем ман инҫене вӗҫеҫҫӗ,
Хам ҫуралнӑ ҫӗршыва ҫити.

* * *

Шурӑ пуҫлӑ тусем кампар та, капӑр та.
Аялта - тӗпӗр-тӗпӗр юхать Теберда.
Ытарми айлӑмра - сурӑхсем тапӑрта...
Тӑхтасам, сӑнасам, арӑм эс, тӑр пӑртак.

# АЧАСЕНЕ САВСА

## ПАЛАН

Садра чечек сарчӗ
Эп лартнӑ палан.
Унта шӑпчӑк ларчӗ
Юрлама паян.

Палана йӑвашшӑн
Лӑпкасан ӑш ҫил,
Чӗнет вӑл ачашшӑн:
"Тусӑм, кунта кил!"

Шӑваратӑп халӗ
Ӑшӑ шывпалан.
Кӗркунне хӑналӗ
Ҫырлипе палан.

## *ПĔРРЕМĔШ КЛАСА*

Тин çеç улттăраччĕ,
Халĕ çиччĕре.
Çитрĕ шкул саманчĕ –
Хĕмленет чĕре.

Ан йĕр, пуканеçĕм,
Ан хурлан паян.
Вĕренме чĕнеççĕ –
Эс хăвах туян.

Тимлĕн хатĕрлентĕм
Эп шкула кайма.
Вулама пĕлетĕп
Темиçе сăмах.

Килĕшўллĕ питĕ
Йăлтăркка сумкка.
Тантăшсен пĕрин те
Ун пекки çук-ха.

Кĕтрĕм, шавваскатрăм
Çакă вăхăта.
Çичĕ хут вăрантăм –
Çунтăм çĕр хута.

Сăн-питре халь кулă,
Çăмăл-çке чуна:
"Аван-и, – теп, – шкулăм,
Йышăн ачуна".

Эп сăмах паратăп
Лайăх вĕренме.
Пур вăя хуратăп
"Пиллĕксем" илме.

## *КОНЬКИПЕ*

Пăла шăнчĕ хытă,
Пăрĕ тĕкĕр пек.
Халĕ ĕнтĕ ыткăн,
Ярăн конькипе.

Кам хуса çитейĕ:
Чи малта – Илле.
Хăвалать ку, тейĕн,
Алхасан çиле.

Ярăнаççĕ вирлĕн,
Питсем – çĕр çырли.
Сывлăх пулĕ çирĕп,
Ку вăл – чи кирли.

Кашни кун касçӳлĕм
Ытарми Пăла
Çĕклет илĕртӳллĕн
Çамрăк кăмăла.

## *ЕЛКĂРА*

Аслă пӳлĕм варрине
Симĕс чăрăш лартрăмăр,
Хĕпĕртӳллĕн ун çине
Тĕрлĕ эреш картăмăр.

Алла-аллăн тытăнса
Ун тавра вылярăмăр.
Савăнса ура хуçса
Мулкачла ташларăмăр.

Сăв каларĕ тăрăшса
Иванюксен Петĕрĕ.
Шăнкăрч пачĕ юрласа –
Чăн та шăнкăрч, темĕр-и?

Виççĕмĕш класри Васук
Пĕр çаптарчĕ çăмăллăн.
Унран ăста ташăç çук –
Ах, пăхмашкăн кăмăллă.

Акă çитрĕ Хĕл-мучи, –
Сăнĕ питĕ савнăçлă,
Çиййĕнче – пин юр пĕрчи, –
Унпа пире канăçлă.

Тараватт Хĕл-мучине
Пурте сывлăх сунтăмăр.
Унăн ырă канашне
Пурнăçлама пултăмăр.

## *ПЁЧЁК ХВЕТЁР*

Хветёр шăллăм пит хастар,
Пултаруллă та вăр-вар.
Иккёмёш класра, шкулта
Вёренет вăл. Шав малта.

Пёрремёш чёрёк пётсен
Таврăнчё хёпёртесе.
– Кил-ха, – тет, – пăхсам тете,
Пётём "пиллёк" табельте.

Çупăрлатăп Хветёре, –
Савăнтарчё вăл сёре:
– Тăрăш эс, – теп, – çакăн пек
Вёренӳ çулталăкпех.

## *МАНĂН ПИЧЧЕ*

Раççей çарĕнчен пичче,
Салтакран çырать.
Тăван çĕршыв чиккинчен
Саламсем ярать.

– Вĕрен, шăллăм, – тет мана, –
Тăрăшса вĕрен.
Эпĕ вара тăшмана
Ямăп чикĕрен.

Манмăп пичче халалне,
Тавтапуç ăна.
Шкулта илĕп малашне
"Пиллĕксем" кăна.

## *ТИХА ТУСӖ – ТЕРЕНТЕЙ*

Пирӗн ялта Сителте
Ӳсет харсăр Терентей.
Пур ҫӗре те ӗлкӗрет,
Унран пурте тӗлӗнет.

Шкултан киле таврăнсан
Хатӗрленет тăрăшса.
Вӗренсе пӗтерсенех
Чăмать лаша витине.

Унта хăй тантăшӗ пек
Пуплет савнă тихипе.
Апат парать, якатать,
Кайран кайса шăварать.

Юрататъ выльăхсене,
Пулăшать аслисене.
– Эпӗ, – тет вăл, – ӳссенех
Пăхма пуҫлăп утсене.

Тата ултă ҫул иртсен,
Вăтам шкула пӗтерсен,
Эп шанатăп, Терентей
Ялта конюх пулатех.

# *ЮРРĂМСЕМ – ÇУНАТĂМСЕМ*

## *КĔВВЕ ХЫВНИСЕМ*

### *ПĔЧĔКРЕН – ПЕПКЕРЕН*

*Кĕвви Н.Эриванован*

*О.И.Талляпа С.П.Ухъянкина*

Пĕчĕкрен – пепкерен
Асатте – аттерен
Илтрĕм ырă сăмахсем
Эп куллен:
Ан ÿсех мăнланса,
Ял-йыша ан мансам,
Ăраскал – çуралнă кил,
Çут тивлет.

Ĕçре пул вашават,
Çынпала – тарават,
Ĕмĕт тăтăр кун-çулна
Çутатса.
Чуну пултăр таса,
Усала таптаса
Ут хăюллăн, пурнăçа
Юратса.

Аслисен пиллĕхне,
Тăван çĕр имлĕхне
Тытрăм яланах чунра,
Чĕрере.
Халăха çĕкленме,
Çĕршыва çĕнелме
Патăм вăйăм-халăма,
Ĕмĕре.

Юхса иртрĕç çулсем,
Кĕмĕлленчĕç çӳçсем,
Пит-куçра халь самана
Йĕррисем.
Çук, манмарăм яла,
Асра тăчĕç ял̆ан
Ытарми атте-анне,
Тăвансем.

## *САЛТАК ТУНСĂХĔ*

*Кĕвви В.Романовăн*

Эп паллашрăм санпа çыру вĕççĕн:
Тыткăнларĕ сăпай кăмăлу.
Сăнÿкерчĕк çинчех куç пĕр вĕçĕм
Илĕртет е туртать йăл куллу.

Эс çуралнă Чăваш Эптĕкелĕ
Аçтарах-ши ларать, хăш тĕлтре?
Сарă кайăк пулса ыр-тĕкеллĕн
Ман çитесчĕ вĕçсе инçетрен.

Эх, çитесчĕ, санпа калаçасчĕ
Тĕл пулса куçа-куçăн темччен.
Юнашаррăн тăрса ут çуласчĕ
Вăрманти сар ĕшне варринче.

Эп шанап: ерипен пĕрех иртĕ
Хĕсметри çăмăл мар икĕ çул.
Умăмра сăнару каç та, ир те.
Ĕненсем: сансăр ман пурнăç çук.

## *МАЛТАНХИ ТЁЛПУЛУ*

*Кёвви Ю.Кудаковăн*

Çуллахи тӳлек кунччĕ, каçкӳлĕм.
Çарана пĕтерсессĕн çулса,
Утрĕ йыш юрласа çĕкленӳллĕн,
Иккĕн пытăмăр темшĕн юлса.

*Хушса юрламалли:*

Малтанхи тĕлпулу –
Паллашу-тĕлпулу...
Çемçе кăпăш аллу,
Ăшă-ăшă куллу,
Ытарми кăмăлу...

Именсе эс мана ташша чĕнтĕн
Каçхине çамрăксен вăййинче.
Астарса яракан çулăм чĕртрĕн
Отпускри яш салтак чĕринче.

Эх, аванччĕ тăма юнашаррăн
Умăрти ват йăмра çумĕнче.
Пуçласа эп сана ыталарăм
Тулли уйăхăн яр çутинче.

## *ЧĔКЕÇ ВĔÇЕТ МĂШĂРĔПЕ*

*Кĕвви Ю.Кудаковăн*

Чĕкеç вĕçет мăшăрĕпе
Ем-ешĕл улăх çийĕпе,
Касса виçет чăн тӳпене,
Пĕрле пайлать хăй телейне.

*Хушса юрламалли:*

Сан çулу та,
Ман çулăм та
Çич çул пыраççĕ юнашар.
Эппин эпир,
Мĕн-ма эпир
Çаплах пурнатпăр уйрăмшар?

Акăш ишет мăшăрĕпе
Мăнаçлăн, Атăл çийĕпе,
Тухать кĕç Йăлăм ĕшнине,
Пуçлать ачашшăн ташшине.

Шăнкăрч килет мăшăрĕпе
Апрелĕн шăнкăр ирĕпе,
Тирпей кӳрет те йăвине
Шăрантарать çеç юррине.

Сырлан ӳсет мăшăрĕпе –
Хăй савнă ар йывăçĕпе.
Унпах сарать вăл çеçкине,
Çитĕнтерет сар çырлине.

*Хушса юрламалли:*

Сан шăпу та,
Ман шăпам та
Йĕкĕрешсем пек, юнашар.
Эппин эпир,
Мĕн-ма эпир
Çаплах халь те çемьеллĕ мар.

## *ШУПАШКАР ПИЛЕШЁСЕМ*

*Кёвви Ю.Кудаковăн*

Хăтлă шур çуртсенĕн умĕнче,
Хурăнлăх, çăкалăх çумĕнче
Çынсене ыр кăмăл пиллесе
Сапăррăн лараççĕ пилеšсем.

*Хушса юрламалли:*

Шупашкар пилешĕсем –
Чăвашъен чиперĕсем,
Вĕлтĕр-вĕлтĕр çулçăсем,
Хĕрлĕ-хĕрлĕ çупкăмсем.

Иксĕлми асам пилешсенче –
Усалтан сыхлан вуллисенче.
Каçсерен вĕсен ытамĕнче
Савăшать яш-кĕрĕм мĕн ирччен.

Импе сим - пилеш сĕткенĕнче,
Ытарми паха эрехĕнче.
Астивсессĕн çимĕçне каç-ир
Хăратаймĕç сĕрĕм те сив чир.

Кĕркунне пилеш ăнса пулсан
Хĕпĕртет чăваш пур кăмăлтан,
Вăйлă ўсĕ тепĕр çул ыраш –
Чĕрене çĕклет ĕлккен малаш.

## *МАНАЙМАСТĂП*

*Кĕвви Ю.Кудаковăн*

Эсĕ те мăшăрпа,
Эпĕ те мăшăрпа.
Уттармарĕ шăпа
Юнашар пĕр çулпа.
Халĕ тин сăлтавне шырамастăп.

Анчах та каçсенче
Сирĕн кил умĕнче
Ват йăмра айĕнче
Шурăмпуç киличчен
Калаçса ларнине манаймастăп.

Аякри улахрах
Çăтмах пек улăхра
Юрласа çӳресе,
Выляса-шӳтлесе
Чечексем татнине манаймастăп.

Çуллахи ир çинче
Сар ĕшне варринче
Çумма-çумлăн тăрса
Чаш та чаш тутарса
Хĕрсе ут çулнине манаймастăп.

Аслă Атăл çинче
Шупашкар тĕлĕнче
Икĕ чун киленсе
Ĕмĕтпе хĕмленсе
Кимĕпе ишнине манаймастăп.

## *ЭХ, ТУСĂМ, ПĂЛАКИ*

*Кĕвви Н.Эриванован*

Пĕвӳ-сийӳ çурта пек,
Сăну мăкăнь çеçки пек.
Эпир пĕрле пулас пек,
Турă çырни тухас пек.

*Хушса юрламалли:*

Эх, тусăм, Пăлаки,
Савнă Пăлаки,
Кӳршĕ ял сарпики.
Эх, тусăм Пăлаки,
Савнă Пăлаки,
Туту сан пылак-и?

Сассу шăнкăрч сасси пек,
Юрру шăпчăк юрри пек.
Эпир пĕрле пулас пек,
Турă çырни тухас пек.

Ĕçре çивĕч пăрчкан пек,
Ырми-канми чĕкеç пек,
Эпир пĕрле пулас пек,
Турă çырни тухас пек.

Сăпай чĕрӳ сар çу пек,
Пуян чуну тĕнче пек.
Эпир пĕрле пулас пек,
Турă çырни тухас пек.

*КĔВĔЛЕМЕН ЮРĂСЕМ*

### *ЭЙ, ТĂВАН ХАЛĂХ, ЭЙ, ТĂВАН ÇĔРШЫВ!*

*Ефросиния Сергеевнăпа Петр Александрович Сидоровсене - юратнă вĕрентекенĕмсене*

Эй, тăван халăх, эй, Тăван çĕршыв,
Сирĕнтен тухать сарă кун ăшши,
Сирĕнтен куçать лĕп çумăр ăшши,
Сирĕнтен килет тӳлек çил ăшши.
Тĕнчере эсир – маншăн чи ăшши.

Эй, тăван халăх, эй, Тăван çĕршыв,
Атте теейсе сире чĕнем-ши,
Анне теейсе сире чĕнем-ши,
Пичче теейсе сире чĕнем-ши?
Çĕр çинче эсир – маншăн чи асли.

Эй, тăван халăх, эй, Тăван çĕршыв,
Хĕвелĕм те ман эсĕрех пуль çав,
Уйăхăм та ман эсĕрех пуль çав,
Çăлтăрăм та ман эсĕрех пуль çав.
Пурнăçра эсир – маншăн чи çутти.

## *МАН ÇĔРШЫВĂМ, МАН ТĔНЧЕ*

*И.Я.Тенюшева*

Анлă уй-хирсем, сĕм вăрмансем,
Тăрă кӳлĕсем, таса çăлсем,
Ват йăмраллă ĕмĕрхи ялсем,
Эрешленĕ хăтлă çурт-йĕрсем.

*Хушса юрламалли:*

Чăвашсем пурнаççĕ çак енче.
Ку вăл – ман çĕршывăм, ман тĕнче.
Çакăнтан эп тухнă çĕр çине,
Çакăнтан çул хывнă инçене.

Хĕвелçаврăнăш пур килсерен,
Пуç тайса кĕтсе илет сире.
Ярăнса ӳсет садра хăмла,
Çăтмахри пек туйăнать çулла.

Çураки пĕтсен çуллен ай-уй!
Кĕр-кĕрлет хаваслă акатуй.
Шăпăрпа курай, кĕсле, тăмра
Çуй тăваç ем-ешĕл айлăмра.

Сурпанне çакайнă инкесем,
Тăхăнса ярайнă хушпусем.
Тав туса параççĕ сăрине,
Ас тивме сĕнеççĕ шăртанне.

Акăш тейĕн вăйăра хĕрсем
Çепĕç те илемлĕ сассисем.
Тухъяпа хăйсем, çут теветпе.
Каччисем – тĕрленĕ кĕпепе.

Акине те сухине туса,
Аслă ăрăва сума суса
Утăмлаç сынсем мала пăхса,
Тĕнчере чипер йĕр хăварса.

## *ЮХАТЬ ПĂЛА*

*(Анатрисен юрри)*

Анат енре хунав патвар,
Аваллăхра – тĕрек-тымар.
Пире çуратнă Мăн Пăлхар,
Пилленĕ ырлăх, пархатар.

*Хӳшса юрламалли:*

Юхать Пăла, юхать Хырла
Шăнкăртатса, юрла-юрла.
Хура тăпра, тӳрем уй-хир,
Юхма тавраш ку, ку – эпир.

Мĕн чуль хур кӳнĕ çичĕ ют:
Арканнă Пăлхарта пӳрт-çурт.
Çавах çынсем пуçа усман,
Мĕскĕнленсе чуна сутман.

Еншик, Ахпӳрт, Турхан, Нăрваш...
Асаттесем пулман йăваш.
Вăрман кăкланă та вăш-ваш,
Ӳстернĕ кантăр та ыраш.

Уйра та фермăра паян
Хастар ял-йыш, чунпа пуян.
Крепков та, Коккель те, Талвир...
Мухтавлă ăруран эпир.

Хĕр-ывăл пирĕн – чăн чăваш,
Хăюллă аптраман тавраш.
Эреш те, юрă та, сăмах
Тĕп мул пулса пырас çумрах.

Чăваш пурнать тĕнче пур чух.
Çĕр çийĕнчен çухалмĕ, çук.
Кӳршĕмĕрсем – ирçе, тутар,
Пуласлăха пĕрлех утар.

## ЭП ПУЯН

Ылтăн та çуккă ман, кёмёл те çуккă ман.
Çав-çавах çакă çут тĕнчере эп пуян:
Çӳлти турă пилленĕ таса сывлăх пур,
Аттепе аннерен илнĕ ыр кăмăл пур.

Ярăнма сăпкари пек машин çуккă ман.
Çав-çавах çакă çут тĕнчере эп пуян:
Куç тулли, ытарми хаклă мăшăрăм пур,
Пултаруллă, маттур ывăл-хĕрĕмĕм пур.

Мул пухмалăх пин-пин сум укçам çуккă ман.
Çав-çавах çакă çут тĕнчере эп пуян:
Икĕ аллăм валли савнă ĕçĕм ман пур,
Малалла йыхăран пысăк ĕмĕтĕм пур.

Ик-виç хутлă чипер мăн кермен çуккă ман.
Çав-çавах çакă çут тĕнчере эп пуян:
Хам çуралнă, йăмраллă чăваш ялĕ пур,
Тӳрĕ чунлă, хастар тăван халăхăм пур.

## САН ПАЯН – ТĂВАН КУН

Çичĕ çул ларакан пичкине
Çапса уçрĕç халь çеç тăвансем.
Пыллă, кăпăклă сар сăрине
Сан ятпа шалт тăваççĕ вĕсем.

*Хушса юрламалли:*

Сан паян – тăван кун,
Эс çуралнă çак кун.
Çунат хуш, савăн, кул,
Савăк кăмăллă пул.

Ултă çул усракан шăртанне
Касса уçрĕç тин çеç хăнасем.
Чăвашсен ытарми апатне
Сан ятпа астивеççĕ вĕсем.

Пўртре – пур хурăнташ, тайăлса
Сан ятпа янратать юррине,
Сăпкари ача пек савăнса
Çĕкленўллĕн ташлать ташшине.

Улăхра çурăлать сар чечек
Улăха та илем, ай, кўме.
Ыр этем çуралать çĕр çинче
Тĕнчене те илем, ай, кўме.

## *ТĂВАНЛĂХ ЮРРИ*

Кӳл хĕрринче палан пиҫсе ҫитет,
Ҫупкăм ҫути шыва ӳкет-ĕҫке.
Тăван-пĕтен ялан аса килет,
Аса илсен – курас килет-ĕҫке.

*Хушса юрламалли:*

Ют ҫын тути те – юн тути,
Тăван тути те – пыл тути.
Ют ҫын чунĕ те – сĕм вăрман,
Тăван чунĕ те – сар кăлкан.

Шап-шур чултан та тунă чашăкки
Вир пăттипе ытла та килĕшет.
Ҫак кил-ҫуртри тăванăн кĕреки
Мĕнпур ратне пуртан пит килĕшет.

Сĕм вăрманпа юртать маттур пăлан
Эпир пĕрех хуса ҫитес ҫук.
Ĕҫер-ҫиер пĕрле, ратне-тăван,
Пĕрех кун-ҫул тепре килес ҫук.

Ирпе ирех хĕвел кулса тухсан
Хура сăр пĕлĕтсем ситрелеҫ.
Хурăнташсем килсе чуна уҫсан
Пуҫри пур хуйăхсем сирĕлеҫ.

Вуник хура чĕкеҫ те пĕр кашта,
Пĕтмерĕҫ юррисем, ай, юрласа.
Пур тăвансем килсессĕн ҫак ҫурта,
Пĕтмерĕҫ сăмахсем, ай, калаҫса.

## *САВӐНСА ЮРЛАМ-И ЮРРӐМА*

Хӑнара эп тӑван ҫуртӑмра,
Ват аттем те аннем –умӑмра.
Ирӗке ярам-и чунӑма –
Савӑнса юрлам-и юррӑма.

Ӑраскал, телей кил-йышӑмра,
Савнӑ арӑм, хӗр-ывӑл – ҫумра.
Ирӗке ярам-и чунӑма –
Савӑнса юрлам-и юррӑма.

Эх, аван хурӑнташ патӗнче,
Юнашар – кинпе шӑллӑм, пичче.
Ирӗке ярам-и чунӑма –
Савӑнса юрлам-и юррӑма.

Уявра туссенчен хакли ҫук.
Тантӑшпа пӗлӗш, кум пӗрле чух.
Ирӗке ярам-и чунӑма –
Савӑнса юрлам-и юррӑма.

Ман тавра – кӳршӗсем, ялйышсем,
Куҫ тулли ытарми ентешсем.
Ирӗке ярам-и чунӑма –
Савӑнса юрлам-и юррӑма.

## *ЭП – ЧĂВАШ ПИКИ*

Юнпа, чунпа, ӳт-пӗвӗмпе
Чăваш эп, чăвашла пуплетӗп.
Чăваш малашӗ пӗтӗмпех
Манпа çыхăннине сисетӗп.

*Хушса юрламалли:*

Илтсем, юратăвăм,
Сана чӗнетӗп!
Килсем, чăваш каччи,
Сана кӗтетӗп.

Ман мул – тухья та шӳлкеме.
Хамах çӗлетӗп те тӗрлетӗп.
Сăра тăватăп, кӗрчеме,
Хуплу-шăрттан тума пӗлетӗп.

Чăвашăн сарă каччине
Эп ӗмӗрлӗх савса юратăп.
Хухтармăп халăх хунавне –
Хӗрне те ывăлне çуратăп.

Ачсем пулайччăр чăн чăваш,
Кӗсле те шăпăр та калаччăр.
Хастарлă аптраман тавраш
Ятне çут тӗнчене кăларччăр.

## *ĂСАТУ ЮРРИ*

Пуçĕсене ывтаç урхамахсем,
Ялан малтан мала каясшăн.
Куçран куçа пăхаç хурăнташсем,
Ĕмĕрлĕхе пĕрле пурнасшăн.

*Хушса юрламалли:*

Хуркайăксен кăнтăралла
Вĕçни илемлĕ.
Килен хăнан юрла-юрла
Кайни илемлĕ.

Ĕшне тулли чечек – шевле вылять,
Ку çăтмахра хальччен пулманччĕ.
Тăван чупса çӳрет, тути кулать,
Кун пек чыса хальччен курманччĕ.

Лутра кăна шĕшкĕ – măйри сап-сар,
Авса татас тесех каç пулчĕ.
Хуçи ытарайми, чĕлхи япшар,
Киле каяс тесех каç пулчĕ.

Эпир йĕтĕн акни нумай пулать,
Хальччен кăвак çеçке çурчех пуль.
Эпир кунта килни чылай пулать,
Çула тухма самант çитрех пуль.

## *ÇУЛ КУРКИ*

Анкарти те хыçёнчен хёвел тухать,
Алă та тăсса ярсан тытас пек.
Куç тулли те тăван умра тăрать:
Кашниех сап-сарă панулми пек.

*Хушса юрламалли:*

И, куркийё, çул курки,
Çул курки мар, чун курки.
Ырлăх-сывлăх пултăр, тет,
Тăванлăха упрăр, тет.

Кёмёл те шыв юхать, хумне хăвалать,
Тинёсе çитесщён, вăй парасшăн.
Хурăнташ куçран пăхать, тути кулать,
Ёмёр савăнса пёрле пурнасшăн.

Тус-тăван хăнана пуçтарăнать
Чёресе те пухнă çёр çырли пек.
Тус-тăван та хăнаран, ай, саланать
Уй-хире те акакан пăрçа пек.

Çăварни çунин тупанё ылтăнран,
Вырнаçсам кил хăвăртрах, ларса юл.
Ытарми хăна-вёрлеçём, тус-тăван,
Уйрăлатпăр акă час, курса юл.

## *ЮРАТУ ЮРРИ*

Чĕнтĕрленĕ çуртăн умĕнче
Шерепеллĕ хурăн айĕнче
Шуçăмччен ларатпăр киленсе,
Ĕмĕтпе çунатпăр хĕмленсе.

*Хушса юрламалли:*

Эх, тĕнче – хитре,
Хĕпĕртӳ – питре,
Кăмăл çĕкленет,
Чунăм киленет
Юнашар савниçĕм пулнă чух,
Куçăмран пăхса йăл кулнă чух.

Чечексем тататпăр улăхра,
Хамăра туятпăр хăтлăхра.
Пĕр чупатпăр алăран тытса,
Е вылятпăр савăнса-кулса.

Çамрăксен вăййи ял варринче,
Эпĕр иккĕн ташă картинче.
Саккăрла çапатăп, куç çиçет,
Ман тавра хĕр акăш пек вĕçет.

Юрату – асамлă çут самант,
Упрасам ăна эс, ан амант.
Вăл çутаттăр вăрăм ĕмĕре,
Кӳтĕрех телей иксĕмĕре.

## *ÇУЛЛАХИ ИР*

*Ю.М.Артемьева*

Ирпеле сывлăм çутийĕ йăлтăр-йăлтăр,
Килсерен хапха сассийĕ шăлтăр-шăлтăр,
Уялла лавсем тапранчĕç кăлтăр-кăлтăр,
Çул çинче тусан хускалчĕ пăлтăр-пăлтăр.

Ял кĕтÿ лаппа ăсанчĕ тăпăр-тăпăр,
Качаки малта васкарĕ йăпăр-йăпăр,
Çырмара юхрĕ çăл шывĕ шăнкăр-шăнкăр,
Ярăнса хăна хĕр анчĕ чăнкăр-чăнкăр.

Кайăксем садра пуçларĕç чăвăл-чăвăл,
Çулçăсем çупайрĕç алă шăпăл-шăпăл,
Ишрĕ кÿлĕре вĕт-шакăр шăмпăл-шăмпăл,
Пулăсем сиксе вылярĕç чăмпăл-чăмпăл.

Вăрманта çил лăпкăн вĕрчĕ вăштăр-вăштăр,
Вĕтлĕхре темле сас пулчĕ чăштăр-чăштăр,
Ёшнере пăши силленчĕ лăштăр-лăштăр,
Кăткăсем ĕçе пикенчĕç кăштăр-кăштăр.

## *ШУХĂШПА ТАÇТА ВĔÇЕТĔП*

Тахçанах пурнатăп çемьепе,
Мăшăра саватăп, хисеплетĕп,
Савăнатăп ывăл-хĕрĕмпе,
Кил-йышран хакли çук-çке – пĕлетĕп.

*Хушса юрламалли:*

Пурпĕр тем çитмест – сисетĕп,
Шухăшпа таçта вĕçетĕп,
Яшлăха аса илетĕп,
Сан килӳ тавра çуретĕп.

Юрататăп хамăн ĕçĕме,
Чун валли куллен сипет илетĕп,
Ĕçтешсем – çумра пĕр вĕçĕмех,
Вĕсенчен пахи çук-çке – пĕлетĕп.

Мухтанатăп тус-юлташсемпе,
Кансĕр чух вĕсемпеле пуплетĕп.
Кĕрешетĕп путсĕр вăйсемпе,
Тус-йышран ырри çук-çке – пĕлетĕп.

## ТУССЕНЕ, ЁÇТЕШСЕНЕ

## СУМА СУСА

* * *

*Л.В.Таллерова*

Утмăл пиллĕк тултартăр кăçал.
Ăраскалăр – Нĕркеç те Каçал.
Çунат сартăр вĕсен пилĕпе –
Вулаканăрсем, ав, пинĕпе.

Хастар мар-и, чăнах, пирĕн ен,
Пĕрре куртăн – тӳрех ĕненен.
Çав хастарлăх Сирте пурăнать,
Ĕçĕр сулăмĕнче курăнать.

Алли ылттăн хиръен – чăвашсен –
Юрă, тĕрĕ, чӳлмек... ăстисен.
Çав ăсталăх куçнах пуль Сире,
Мĕн çырни ахах евĕр, хитре.

Хамăр халăхăн мĕн ĕлекрен
Чун тасалăхĕ, чыслăх тĕпре.
Çав тасалăх – ăс-хакăл палли –
Ялкăшать халь Сирте куç тулли.

Самана пăтранса тăнă чух
Чăваша та пачах канăç çук:
Малашне темĕн пур курасси.
Ах, пит кирлĕ çыравçă сасси!

1994

* * *

*В.П.Станъяла*

Ирçесем патне тек чупрăмăр,
Пушкăрт-çармăс таран юртрăмăр.
Пурпĕр чикĕ вĕçне тухрăмăр,
Хамăр шыранине тупрăмăр.

Тӳпери Чăвашăн çăлтăрĕ
Ĕмĕр йăлтăртатса тăтăр-и,
Малалла утар-и çĕкленсе,
Халăхшăн çунар-и хĕмленсе.

1987

* * *

*З.Л.Ильина*

Аллусем выляççĕ – çиçĕм-вут,
Юлхавпа кахаллăх саншăн ют.
Ĕç тăватăн паттăр улăпла.
Çавăнпах паллашрăм санпала.

Çын хуйхийĕ чĕрӳне пусать,
Çын инкекĕ кăмăлна пăсать.
Вашават, ăш-пиллĕ пулнăран
Çакланмашкăн тăрăшрăм санран.

Тĕнчере вăйлийĕ тӳр сăмах.
Ылтăн та ахах вăл чăн-чăнах.
Ыр сунса куçран каланăран
Килĕштертĕм эп сана чунран.

Пурăнатăн аслă малашпа,
Ялкăшатăн ăслă шухăшпа.
Çынлăхна курса ăмсаннăран
Хăпаймарăм ĕмĕр эп санран.

Пуç таям-и умăнта паян,
Юррăма пуçлам – тăсам баян.
Эс пуртан илемлĕ çут тĕнче,
Эп хам та телейлĕ çĕр çинче.

1990

* * *

*Л.Е.Андреева*

Муркаш та Матьăк, Йӳскасси...
Чун-чĕрӳнте вĕсен сасси.
Унта шăтса сан Пуласси,
Пуҫланнă пурнăҫ пăласси.

Аннӳ – Верук, аҫу – Якур,
Пайтах курсан та хура-шур,
Пăхса ӳстернĕ-ҫке маттур,
Санра вĕсен хавалĕ пур.

Ăспа тăн панă аслă шкул,
Тĕреклĕх суннă комсомол,
Пилленĕ халăх: “Паттăр пул,
Саманаран шит те ан юл!”

Ҫумрах эпир те юнашар,
Сан тусусем хевтесĕр мар.
Пĕрле нихҫан та тӳсмĕн шар,
Курайăн ырлăх, пархатар.

Кил-ҫуртăнта – илем, тирпей.
Мăшăрпа хĕр пурри – телей.
Ик ыр ҫунат, ик ҫут хĕвел,
Хутлăхĕнче – ху. Ҫиҫ, ҫĕнел!

Ăслăлăхри уйра паян
Эс Улăп евĕр туйăнан.
Тулли те тарăн сухалан,
Тухăҫлăхпа савăнтаран.

Пасарăн экономики...
Чăн, ик айкки те тăвайкки.
Тĕпчетĕн: “Пур, тен, сĕвекки?..”
Сайра ученăй сан пекки.

Вĕрентӳре ырми, хастар
(Залра ахаль тухать-им тар?!)
Студент таврашĕ – харсăр çар –
Сана тăнлать пĕр сассăр, кар.

Чи ăслă шухăшсен çăмхи
Сӳтĕлĕнсе пырать хайхи...
Танлаштаран: "Ку – ĕлĕкхи,
Ак çак вара вăл – паянхи".

Упа пуль эсĕ – утаман,
Пусса патваррăн утакан.
Йывăрлăхра пуça усман,
Нихçан ниçта та аптраман.

Чăваш ĕçченлĕхĕ – санра,
Чăваш типтерлĕхĕ – санра,
Чăвашăн тӳсĕмĕ – санра,
Чăваш тасалăхĕ – санра.

Ача-пчапа чухне – ачаш,
Яш-кĕрĕмпе эс – çамрăк, яш.
Тантăшсемпе-тĕк – тус, юлташ.
Ваттисемпе вара – йăваш.

Кун-çул шăвать шав малалла,
Çулсем юлаççĕ каялла.
Ак çитрĕн эс те утмăла,
Çавах патваррăн утмалла.

Пиртен салам эс йышăн, ил.
Пуça тайса парар пехил,
Мухтав сана, сăвап та пил!
Кăшт чуптуса илер-и, кил!

1995

* * *

*Е.Й.Степанован*

Эс – чечек, ҫутҫанталăк чечекĕ.
Шăтса тухнă Тăвай ҫĕрĕнче,
Сĕткен илнĕ Чутай енĕнче,
Ҫеҫке сарнă чăваш хулинче.
Эс пуртан хитререх пек тĕнче.

Эс – тĕрек, хурăнташлăх тĕрекĕ.
Юнашар – йăмăку, виҫ шăллу;
Мăшăру-упăшку – тĕп мулу;
Ик ҫунат пекех ик ывăлу...
Вĕсене ăшăтать кăмăлу.

Эс – ĕҫчен, Чăвашъенĕн ĕҫченĕ.
Яланах пуҫарулла, хастар.
Пăрчăкан пек хĕрӳ те вăр-вар.
Малалла йыхăран: "Вăй хурар,
Илĕртӳллĕ,хĕлхемлĕ ҫырар!"

Эс – ялав, пирĕн йышăн ялавĕ.
Чуну пĕчĕк чăвашшăн ҫунать.
Ҫавăнпа тав тăвать те сана,
Тайăлса ҫирĕп сывлăх сунать
Аякка вирхĕнен "Ҫилҫунат".

1991

* * *

*Л.Я.Павлова*

Пултаруллӑ, йӑрӑ та вӑр-вар,
Питӗ вашават та васкавар.
Нихӑҫан та курмӑн типӗ шар
Санпала пулсассӑн юнашар.
Ахальтен-им – Куславкка ачи.

Атӑл евӗр сарлака чуну,
Шыв тӗкӗрне илнӗ пуль сӑну,
Хум пекех сикет вӗри юну,
Кӗрешсе иртет кашни куну.
Ахальтен-им – Атӑлҫи ачи.

Улӑп тейӗн: ҫирӗп те тӑппан,
Ӗҫлӗхне, тен, илнӗ кӑткӑран.
Аллусем ӑста – те ылттӑнран,
Ху вара сӑпайлӑ – тем таран.
Ахальтен-им – Чӑвашъен ачи.

Каласне калатӑн тӳрӗрен.
Усала касатӑн, ӳкерен.
Ыррине хӑюллӑн хӳтӗлен,
Этеме саватӑн чӗререн.
Ахальтен-им эс – Раҫҫей ачи.

Пуҫтаран та ӑшшӑн хӑв тавра,
Парнелетӗн кулӑш вун ҫавра,
Кӑмӑла ҫӗклен те астаран,
Малалла каймашкӑн вӑй паран.
Ахальтен-им – "Хатӗр пул" ачи.

1990

* * *

*Л.П.Сергеева*

Вырăсла – Леонид Павлыч,
Чăвашла – Люнькка пичче.
Çакă ят пурне те паллă,
Вăл – ялан чĕлхе çинче.

Туптанать тĕпчев пĕр вĕçĕм
Ăслăлăхăн лаççинче.
Чыс-сум илчĕ вун-вун ĕçĕр
Аслă тĕрĕк тĕнчинче.

Чăвашсен – пуян сăмахлăх,
Мĕскĕн мар тăван чĕлхе.
Мĕншĕн-ха ăна мухтамăн
Кăларать пулсан хĕлхем.

Хăнăху ĕçне тăваç-и,
Е лараççĕ лекцире, –
Студентсем шăпах... – тăнлаççĕ
Антăхса-çунса сире.

Çавнашкал ырма пĕлмесĕр
Камах пур-ши ĕçлекен:
Çулсерен çыратăр эсĕр
Шкул валли çĕн кĕнеке.

Тĕпчевре – çĕршер чĕлхеçĕ,
Ӳсрĕ ешĕл хунав пек.
Вăйлисем çӳле вĕçеççĕ
Эсĕр çул кăтартнипе.

Халăхра сире хаклаççĕ,
Юратаççĕ килĕрте:
Эсĕр – ырă-ырă ашшĕ,
Эсĕр – ылтăн асатте.

Эсĕр – пирĕн çирĕп шанчăк,
Кулленхи тĕрев-тĕрек.
Çут сăнар çунатлантарчĕ
Тăвалла утма пире.

Пысӑк пулӑшу – туятпӑр,
Ҫавна эпир хамӑр та.
Тав туса пуҫа таятпӑр
Паян сирӗн умӑрта.

1994

* * *

*М.Ф. Чернова*

Эсӗ пирӗн утаман-упамăр,
Турă панă хуçăлми хуçамăр,
Вăйăра чунпа туятпăр хамăр.
Никама та çемçелмешкӗн памăр,
Пирӗн йыш ятне нихçан та ямăр.

Эсӗ пирӗн паттăр ăмăрткайăк,
Чӗппӳсем – эпир, самай нумайăн.
Сан çунатусем тӗреклӗ, лайăх.
Ту-сăрт çийӗн харсăр вӗçнӗ майăн
Аякка пире илсе эс кайăн.

Эсӗ пирӗн пӗлӗт çӳллӗш Улăп.
Утăмлатăн сӗм вăрман, уй урлă,
Малалла хыван çул пултаруллăн.
Сан хыçран пире пымашкăн çăмăл,
Ӗç ăнса пырать, хаваслă кăмăл.

1995

* * *

*Г.А.Анисимова*

Сан тăрăху – Йĕпреҫ, Эйпеҫ...
Паян асамлăн илтĕнеҫ.
Тивлечĕпе ҫĕклентĕн каш!
Пулман мемме, пулман йăваш!
Салам сана, маттур чăваш!

Ĕҫ-пуҫ енчен эс – чăн-чăн яш,
Лекци-доклад тăван вăш-ваш.
Студентшăн эс – атте, юлташ.
Паран ăна пĕлӳ, канаш.
Пехил сана, хастар чăваш!

Вăр-вар наука анинче,
Ятна пĕлет тавра-тĕнче.
Вун кĕнеке ытла – паллаш! –
Тăван шкула сунан малаш.
Тавах сана, ăсчах чăваш!

Пуян чĕреллĕ, ыр этем...
Пурте тăраймĕҫ ҫак рете, –
Таса та ҫутă сан тавраш,
Кашни ҫын саншăн – хурăнташ.
Вăй-хал сана, сăпай чăваш!

Юхсах пымарĕ самана,
Пыл хыптармарĕ вăл сана.
Ҫук, сывламан эс пурпĕр хаш!
Пуҫа усса ларман ачаш.
Мухтав сана, патвар чăваш!

1994

* * *

*В.И.Игнатьеваñа*

Килтĕн-кĕтĕн çĕкленӳллĕн,
Савăнса-кулса,
Пирĕн кивĕ тăвăр пӳлĕм
Кайрĕ çуталса.

Тăпăл-тăпăл, йăрăс пӳллĕ,
Çи-пуçу – хитре.
Çепĕç туйăм, илĕртӳлĕх
Йăлкăшать питре.

Сан çинчех куçсем пĕр вĕçĕм,
Илтĕн тыткăна.
Пĕчĕк йышăн пысăк ĕçĕ
Çĕнелет кăна.

Малашне те кашни ирĕн
Ăшăтсам пире.
Хаклă çыннăмăр эс пирĕн,
Тĕнчере пĕрре.

1993

* * *

*З.Д.Ярдыковăна*

Чăваш уйрăмне эс пире савса килтĕн,
Театр ăстийĕ, ӳнерçĕ-ăсчах.
Çунатăн айне пуçтартăн та илтĕн.
Эс – ылтăн пуль пирĕн, е йăлтăр ахах.

Пĕрре юрлаттартăн, тепре ташлаттартăн,
Яш-кĕрĕмçĕм, терĕн, ан усăн, çĕнел.
Нарспи евĕр селĕм утма хăнăхтартăн.
Эс – пирĕн çут уйăх, эс – пирĕн хĕвел.

Пиллерĕн чăваш чĕлхине юратмашкăн:
"Сасси ун çемçе те ачаш, чĕвĕлти".
Вĕрентрĕн янравлăн, хитрен калаçмашкăн.
Эс – пирĕншĕн турă, таса пирĕшти.

Мала йыхăратăн, ху хыççăн çĕклетĕн,
Çĕкленсемĕр, тетĕн, пĕлӳ тӳпине.
Чăвашлăх хĕмне упрамашкăн чĕнетĕн,
Телейĕмĕр пирĕн, эс – пирĕн анне.

1996

# *КУÇАРУСЕМ*

*Михаил Имяреков,*
*мăкшă поэчĕ*

## *ХĂШĔ КИРЛĔРЕХ?*

Платнике те,
Столяра та, –
Тĕрлĕ маçтăр-ăстана
Пӳрт лартма, тесе пуçтарнă
Ял хĕрне, укăлчана.

Кантăкçă Çтаппан хĕрӳллĕн:
"Чи кирли, – тет, – чӳрече.
Кĕленчесĕр пулмĕ пӳлĕм,
Пурнăç пĕтĕ çĕр çинче".

Шăвăççă сывларĕ ассăн,
Сăмах хушрĕваскавар:
"Çивитти, тен, эс каласшăн:
Пӳрт-çурта пач кирлĕ мар?"

"Йăнăшатăр хытă эсĕр, –
Чăтаймарĕ мăклакан, –
Эп енчен питĕрмесессĕн
Ала пулĕ çуртăртан".

"Столяра ма хакламастăр? –
Тарăхса калать Ваççук. –
Алăкне туса памасп-тăк
Пӳртĕре çын куçас çук".

Платниксем пăхаç хăяккăн:
"Ăс-пуçу, – теç, – пур-и сан?
Алăкна ăçта-ха çакăн,
Пурине туман пулсан?"

...Выртрӑм слива айӗнче,
Ҫирӗм ӑшӑм каниччен,
Кашнине тем пек тӑнларӑм,
Пурпӗрех ӑнланаймарӑм,
Калӑр: хӑшӗ кирлӗрех?
Шухӑшлӑр-ха вирлӗрех.

1989

*Владислав Шошин,*
*Ленинград поэчӗ*

* * *

Çак манăçми кӗпер Литейнăй ятлă,
Çиçет çурхи хӗвелӗн çутинче.
Чечеклӗ май! Уяв кӗрлет хăватлăн –
Çулпуç пырать – малти плакат çинче.

Кӗрхи сӗм каç... Ильич каçса ун урлă.
Нева шăп тăнă тăнласа ăна.
"Эй, чарăн!" – тенӗ юнкерссен патрулӗ,
Тискер сасси ян кайнă таврана.

Путлан, тăшман! Утать хăюллăн Ленин
Мăн Смольнăя – ав, ӗççынни кӗтет!
Унччен хăй те пайтах ларса тертленнӗ
Тӗрме умӗпеле патвар иртет.

Ярăмланать Раççейӗн шурăмпуçӗ –
Ӗмӗтленни кӗç кӗрӗ пурнăçа.
Октябрь штабӗн витӗр вичкӗн куçӗ –
Ӗçлет-çунать, пӗлмесӗр канăçа!

1988

## ТУПМАЛЛИ

МАЛТАНХИ УТĂМСЕМ
Висĕ ят ..... 4
Атăл тăрăхĕ, Атăл тавраш ..... 5
Тăван Пăла ..... 6
Шкулăма ..... 8
Акатуй сăвви ..... 9
Юлашки рейс ..... 10
Аттестат илсен ..... 11
Ална пар, Шупашкар ..... 12
Тĕлпулу ..... 13
"Марьене пĕр вĕçĕмрен..." ..... 14
Çурхи сăнсем ..... 15
Йывăç лартма ..... 16
"Илĕртӳллĕ çуркунне..." ..... 17
"Хир çийĕн хавaслă..." ..... 18
Çыру килчĕ Алтайран ..... 19
"Чăпар тумпа вăрманĕ, уйĕ..." ..... 20
"Урампа пырать пĕр ӳсĕр..." ..... 21
САЛТАК САССИ
Аннене ..... 23
Шупашкар калаçать ..... 25
"Çартан çыру илсен манран..." ..... 26
Хĕр сăмахĕ ..... 27
"Ун чухне çанталăк пуçсенчен шăлмарĕ..." ..... 28
Çĕнĕ çул касхине ..... 29
Юрă – пирĕн çунат ..... 30
"Тухăçа чăмать çĕмрен пек пуйăс..." ..... 31
Нимĕç хĕрĕсем сулаççĕ алă ..... 32
ХАЛЬХАÇÇĂНХИ КĂМĂЛĂМ
Тăван ялăма – Еншике ..... 33
Тăхăрвуниккĕмĕшне кĕнĕ май ..... 34
"Çитетпĕр утмăла, кĕçех иртетпĕр..." ..... 35
Сăваплă алăсем ..... 36
Чăваша мĕн çитмест? ..... 38
"Чăваш улăпне çак хĕрарăм çуратнă..." ..... 39
"Юхать, юхать Энĕш, ай, юхать..." ..... 40
"Сăн-питĕнте - тасалăх, çутă..." ..... 41
"Тавтапуç сана..." ..... 42
Раштав ..... 43

Ай, чун ыратать ........................................ 44
"Шăплăх... Турăш та çурта, лампада..." ........................................ 45
Пинерпи ........................................ 46
Ах, мухмăр кастарать! ........................................ 47
Темиçе йĕркен ........................................ 49
АЧАСЕНЕ САВСА
Палан ........................................ 52
Пĕрремĕш класа ........................................ 53
Конькипе ........................................ 54
Елкăра ........................................ 55
Пĕчĕк Хветĕр ........................................ 56
Манăн пичче ........................................ 57
Тиха тусĕ – Терентей ........................................ 58
ЮРРĂМСЕМ – ÇУНАТĂМСЕМ
КĔВВЕ ХЫВНИСЕМ
Пĕчĕкрен – пепкерен ........................................ 59
Салтак тунсăхĕ ........................................ 61
Малтанхи тĕлпулу ........................................ 62
"Чĕкеç вĕçет мăшăрĕпе..." ........................................ 63
Шупашкар пилешĕсем ........................................ 64
Манаймастăп ........................................ 65
Эх, тусăм, Пăлаки ........................................ 66
КĔВĔЛЕМЕН ЮРĂСЕМ
Эй, тăван халăх, Эй, Тăван çĕршыв! ........................................ 67
Ман çĕршывăм, ман тĕнче ........................................ 68
Юхать Пăла ........................................ 69
Эп пуян ........................................ 70
Сан паян – тăван кун ........................................ 71
Тăванлăх юрри ........................................ 72
Савăнса юрлам-и юррăма ........................................ 73
Эп – чăваш пики ........................................ 74
Ăсату юрри ........................................ 75
Çул курки ........................................ 76
Юрату юрри ........................................ 77
Çуллахи ир ........................................ 78
Шухăшпа таçта вĕçетĕп ........................................ 79
ТУССЕНЕ, ĔÇТЕШСЕНЕ СУМА СУСА
"Утмăл пиллĕк тултартăр кăçал..." ........................................ 80
"Ирçесем патне тек чупрăмăр..." ........................................ 81
"Аллусем выляççĕ - çиçĕм-вут..." ........................................ 82
"Муркаш та Матьăк, Йÿçкасси..." ........................................ 83

"Эс - чечек, çутçанталăк чечекĕ..." 85
"Пултаруллă, йăрă та вăр-вар..." 86
"Вырăсла - Леонид Павлыч..." 87
"Эсĕ пирĕн утаман-упамăр..." 89
"Сан тăрăху - Йĕпреç, Эйпеç..." 90
"Килтĕн-кĕтĕн çĕкленӳллĕн..." 91
"Чăваш уйрăмне эс пире савса килтĕн..." 92
КУÇАРУСЕМ
Хăшĕ кирлĕрех? (Мих.Имяреков сăвви) 93
"Çак манăçми кĕпер Литейнăй ятлă..."
(Вл. Шошин сăвви) 95

Александр Иванович
**Мефодьев**

# ТЕЧЕТ БУЛА

Стихи
На чувашском языке

Редактор **В.А.Васильев**
Технический редактор **Н.Л.Гурьева**
Художник **Н.Д.Енилин**
Корректор **А.С.Мефодьева**

Сдано в набор 16.12.97. Формат 84х100 $^1/_{32}$
Объем 2,6 уч.-изд.л. Тираж 300.

Отпечатано на множительной технике Чувашгоспединститута

3р00к



*Александр Мефодьев 1938 çулхи чӳкӗн 28-мӗшӗнче Патӑрьел районӗнчи Еншик ялӗнче çуралнӑ. И.Я.Яковлев ячӗллӗ Чӑваш патшалӑх педагогика институтӗнчен вӗренсе тухнӑ, филологи ӑслӑлӑхӗсен кандидачӗ, Раççей çыравçисен тата журналисчӗсен Союзӗсен членӗ. Йӗпреçпе Патӑрьел районӗсенчи хаçатсен редакцийӗсенче тата парти комитечӗсенче, КПСС Чӑваш обкомӗн культура пайӗн инструкторӗнче, "Хатӗр пул" (Çилçунат) журналӑн тӗп редакторӗнче ӗçленӗ. Хальхи вӑхӑтра вӑл – Чӑваш railinститучӗн доценчӗ.*

*"Юхать Пӑла" – Çыравçӑ-ӑсчахӑн тӑваттӑмӗш кӗнеки.*